25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
3
ШАМАТКУН
231 (6166) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсен задачисем

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕл çывхарса килет. Ăна эпир хаяр обстановкăра кĕтсе илетпĕр. Фронтсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман Сталинград патнелле талпăнать. Тăван çĕршыв совет халăхĕнчен нихăçанхи пек мар вăй хурса ĕçлеме, организованнăрах пулма ыйтать. Тăшман хăйĕн тата «союзникĕсемпе» вассалĕсен мĕнпур вăйĕсене пире хирĕç кĕртсе янă. Гитлерла вăрă-хурахсен пĕтĕм йыткĕтĕвне хирĕç эпир пĕччен тăрса çапăçатпăр.

Çакăн пек условисенче пирĕн хамăр çĕршывăн мĕнпур резервĕсемпе, мĕнпур ресурсĕсемпе туллин усă курмалла, фронта татти-сыпписĕр хĕçпăшалсемпе материалсем парса тăрас, тыла пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле тăвас шутпа пур майсемпе те усă курмалла.

Пирĕн çарăн боецĕсем сывлăх тĕлĕшĕнчен çирĕп пулни, пирĕн çар сывлăхлă пополнени илсе тăни, фронтпа тыл тĕрлĕрен ерекен чир-чĕрсенчен сыхă тăни, оборона завочĕсемпе ялхуçалăхĕнче ĕçлекен совет çыннисем сывлăхлă пулни, чирленипе ĕçрен юлассине мĕн май килнĕ таранах чакарни мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни каламасăрах паллă.

Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен совет органĕсем умĕнче ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсем вăрçă малалла аталанса пынинчен, çавăн пекех тата хĕл çывхарса килнинчен тухса тăраççĕ. Аманнисем сывалса строя таврăннине кăтартакан процент пирĕн çĕршывра, ытти çĕршывсемпе танлаштарсан, чи çӳллĕ виçере тăрать. Ку тĕлĕшпе татах та пысăкрах çитĕнӳсем тумалла. Çынсене лайăхрах та хăвăртрах сыватмалла. Фронтпа тыла санитарипе медицина тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине тăтăшах лайăхлатса пымалла.

Çав паха та ответлă задачăсене татса пама мĕнле майсем кирлĕ-ха? Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсенчи аппарат тĕрĕс ĕçлени, профилактика енĕпе анлă ĕçсем туса пыни, урăхла каласан, сыватассипе санитари тĕлĕшĕнчен кăна мар, çавăн пекех хуçалăх тĕлĕшĕнчен те анлă профилактика туса пыни кирлĕ.

Сывлăха сыхлас ĕçпе çыхăннă кирек мĕнле ĕçре те — медицина персоналĕсем парса тăрас енĕпе те, медикаментсем çителĕклĕ таран парса тăрас енĕпе те пĕрремĕш вырăна фронт йышăнса тăрать. Анчах та çакă вăл тылшăн тăрăшма пăрахмаллине пĕлтермест. Тыл çĕнĕрен çĕнĕ боецсем çитĕнтерет, Хĕрлĕ Çарăн аманнă е чирленĕ боецĕсемпе командирĕсене сывлăх таварса парать, оборонăн промышленноçне пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерет, колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенчи тырпулсене вăхăтра пухса кĕртет. Çаксем пурте сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсенчен пĕтĕм вăя хурса активлăн ĕçлеме ыйтаççĕ. Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсене партипе советăн организацийĕсем, обществăллă организацисем, наркоматсем, предприятисем пулăшма тивĕçлĕ.

Медикаментсем хатĕрлес ыйтăвах илер. Вĕсене туса кăларасси çулталăкăн кирек мĕнле тапхăрĕнче те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Паллах ĕнтĕ, фронт ыйтнине пуринчен малтан тивĕçтермелле. Çав задачăна мĕнле те пулин ăнăçлăрах пурнăçа кĕртес тесен, ку енĕпе ĕçлекен промышленноçа унăн хăйĕн ĕçне туса пыма чăрмантаракан кирек мĕнле кăлтăксенчен те мĕн май çитнĕ таранах хăтармалла.

Халĕ, вăрçă вăхăтĕнчи условисенче, центртан парассине кăна кĕтсе ларас шухăш-кăмăла облаçсенче яланлăхах пĕтермелле. Кирек мĕнле районра та вырăнти тĕрлĕ йышши чĕртавар пур, çавăн пекех тата çулран-çул пухса пынă дефицитлă чĕртаварăн юлашкийĕсене те тупма пулать. Кашни облаçра çав чĕртавартан хатĕр продукт туса кăларма пултаракан союзри, республикăри, вырăнти промышленноçăн предприятийĕсем те пур. Медикаментсем, чирлĕ çынсене пăхмалли япаласемпе хатĕрсем, санитарипе гигиена хатĕрĕсем туса кăларас ĕçре вырăнти советсен çав майсене пурне те мобилизацилес пулать. Çавăн пек вырăнти пуçару хăйне чаплăн тӳрре кăларнине пурнăç кăтартса пачĕ.

Хĕллехи вăхăт çывхарса килни сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисем валли вутă хатĕрлес, çуртйĕрсене ремонтлас, хутса ăшăтмалли системăна тĕрĕслесе тухас ыйтăва питех те çивĕччĕн лартать. Ку енĕпе эпир мĕн тумаллине пурне те тунă-и-ха? Çук, туман. Иăлтах çӳлтен парассине кĕтсе ларакан районсем те халĕ пур-ха. Çапла, сăмахран, Кузбасри нумай хуласенче вырăнти кăмрăкпа усă курасшăн мар, центртан наряд парассине кĕтеççĕ. Томск хулинчи мунчасенче вутă пĕтĕмпе те 3—4 кун хутмалăх кăна пурри намăс мар-и-ха ĕнтĕ? Томск хула исполкомĕ вырăнти топливăна хакламасть, унта торф кăларас ĕçе начар туса пыраççĕ, вутă хатĕрлемеççĕ.

Вырăнти советсем хăйсене тимлĕ хуçасем пек тытнă çĕрте ĕçсем пачах та урăхла тăраççĕ. Çапла, сăмахран, Молотов облаçĕнчи Березники хулинчи сывлăх учрежденийĕсем валли топливо çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хунă. Сĕнтĕрвăрри хулинче те (Чăваш республики) çавăн пек тĕслĕхех курма пулать. Кунта топливо хатĕрлес ĕçе çуллахи вăхăтрах тытăннă. Халĕ ĕнтĕ кунти мунчасем те, больницăсем те вутă çитменни пирки ӳпкелешме пултараймаççĕ.

Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен пур учрежденисен те ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне хăйсене валли хĕл каçиччен хутмалăх вутă хатĕрлесе хуччăр тесе васкавлă мерăсем йышăнмалла. Больницăсен çурчĕсене питĕрсе ăшăтман çĕрте вĕсене питĕрсе ăшăтмалла, кăмакисене, алăкĕсемпе чӳречисене тĕрĕслесе тухса халех юсамалла. Çак ĕçе вырăнти советсен кăна мар, больница çывăхĕнчи предприятисен руководителĕсен те хутшăнмалла. Сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем çак мероприятисене пурне те пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшмалла. Топливăна сыхласа усрас тата перекетлĕн тыткалас ĕçе те вĕсеннех сăнаса пыма лекет.

Апат-çимĕç ыйтăвĕ çакăнтан пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Чирлисене тăрантарма государство çителĕклĕ таранах средство парать. Вырăнти советсен задачи—больницăсене те, çавăн пекех тата ача яслисене те пахча-çимĕçсем çителĕклĕ таран тупса парасси пулса тăрать. Пахча-çимĕçсем хатĕрлес, вĕсене усрамалли çуртйĕрсем тăвас ĕçе ниепле те кая хăварма çук. Чĕрĕ пахча-çимĕçсем вĕсем çимĕç кăна мар, çавăн пекех чирлисене сыватма кирлĕ паха витаминсем те пулса тăни çинчен манма юрамасть.

Вутă, апат-çимĕç, транспорт тĕлĕшĕнчи мĕнпур хуçалăхлă мероприятисене санитарипе йăла тĕлĕшĕнчи мероприятисемпе пĕрле туса пырсан кăна вĕсем сывлăха сыхлав органĕсене чăннипех пулăшу пама пултараççĕ. Çав мероприятисем оборона предприятийĕсенче уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Унта час-часах руководитель пĕтĕмĕшпех производство ыйтăвĕсене парăннă пирки, санитари, медицина ыйтăвĕсем çине çавăрăнса пăхаймасть. Ĕç чирлĕ çынна сыватассинче кăна мар тăрать. Çынна чирлеме памалла мар, чир пуçланса каяссинчен сыхланмалла. Хăшпĕр çĕрте предприятисенче рабочисене ĕçмелли шыв та парса тăраймаççĕ.

Предприяти руководителĕсен, партипе профсоюз организацийĕсен рабочисене санитарипе йăла тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрас ĕçе активлăн хутшăнмалла. Çакă вăл рабочисем чирлессине чакарма, çапла вара ĕç кунĕсем çухалнине чакарма май парать.

Ĕççыннисен сывлăхĕ—государство ĕçĕнчи пĕрремĕш вырăнта тăракан ыйту. Çывхарса килекен хĕл, вăрçă вăхăтĕнчи хĕл, ниепле те ырана хăварма çук çивчĕ ыйтусем лартать. Вăл ыйтусене пурнăça кĕртессишĕн сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем кăна мар тăрăшмалла, çавăн пекех вĕсене хуласемпе районсен совечĕсенче халех сӳтсе-явса тивĕçлĕ мерăсене пурне те йышăнмалла

Сывлăха сыхлас ĕçре хĕле пур енĕпе те хатĕрленсе кĕтсе илме пирĕн пур условисем те пур. Çак ĕçсене пирĕн тумалла, мĕншĕн тесен çакă вăл—фронта вăйлă пулăшу пани; тискер те ылханлă тăшмана çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве тивĕçлипе вăйлă пулăшу пани пулса тăрать.

(«Правда», октябрĕн 1-мĕшĕнчи умстатья).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Д. Г. Ларионов юлташа Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Димитрий Григорьевич **Ларионов** юлташа Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ

Шупашкар хули, 1942 çулти октябрĕн 2-мĕшĕ

МТС-сен дирекцийĕсемпе политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Элĕк МТС-ĕ тăрăх:

133. Тракторист **Роман Павлович Павлов.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне, авăн çапассисĕр пуçне, 214 процент тултарнă, 1.343 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

134. Машиновед **Михаил Никитич Никитин.** Вăл сентябрь уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапмалли план тăрăх 340 тоннăлăх ĕçленĕ, планра 304 тонна кăтартса панă пулнă.

135. Слесарь **Александр Родионович Родионов.** Вăл пĕтĕм сезон тăршшĕпех кулленхи ĕç нормине 300 — 350 процент тултарса пынă. Çулталăк пуçланнăранпа мĕнпурĕ 6.214 тенкĕлĕх детальсем хатĕрленĕ, вĕсенче нумайĕшне киввисене юсаса сĕнетнĕ. ыттисене çĕнĕрен тунă.

Государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатар

Кăнтăрла та, каçхине те хатĕрлев пункчĕсене тырă пырать. Малта пыракан колхозсен законĕ çапла: вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене тата МТС ĕçĕшĕн тивекен натуроплатăна çулран çул срокчен парса татаççĕ. Халĕ, вăрçă пынă кунсенче, çак ĕçе вăхăтра пурнăçлани уйрăмах питĕ кирлĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă хăйсен постановленинче государствăна тырă тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене парас ĕçе уборкăн малтанхи кунĕсенчех анлăн туса пыма кирлине палăртса хăварчĕç. Государствăна тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕç, техникăллă культурăсем парас ĕçе колхозсем пилĕккунлăх заданисем тăрăх пурнăçласа пымалла.

Çак кăтартусене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырса, Чăваш республикинчи чылай колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная Армия», «Осоавиахим» колхозсем государствăна тырă, пахча-çимĕç, техникăллă культура памалли обязательствăсене сентябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче тултарнă.

Государствăна тырă памалли плана Шупашкар районĕнчи колхозсем ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район государствăна обязательствăсем тăрăх тĕштырă памалли плана 70,4 процент, натуроплата планне 69,7 процент пурнăçланă. Хĕрлĕ Çарăн фондне хывмалли тырра 91,4 процент леçсе панă. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе район республикăра пĕрремĕш вырăнта тăрать.

Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн Куславкка, Çĕмĕрле, Октябрьски, Вăрнар районĕсенчи колхозсем те тимлĕн кĕрешеççĕ. Куславкка районĕ обязательствăсем тăрăх государствăна тырă парас плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 69,5 процент, натуроплата планне 61,1 процент, Хĕрлĕ Çар фондне хывмалли тырра 38,9 процент парса татса, республикăра иккĕмĕш вырăн, Çĕмĕрле районĕ тырă парас плана 99,7 процент, натуроплата планне 39,5 процент, Хĕрлĕ Çар фондне хывмалли тырра 16 процент парса республикăра виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Иртнĕ пилĕккунлăхра государство умĕнчи обязательствăсене парса татас тĕлĕшпе Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Шăхасан районĕсенчи колхозсем ĕçре пысăк хăвăртлăх кăтартрĕç. Вăрнар районĕ государствăна тырă тăратмалли пилĕккунлăх заданине 123,2 процент пурнăçланă, Йĕпреç районĕнчи колхозсем пилĕккунлăх заданине пурĕ 157 процент пурнăçланă. Çавăн пекех Канаш, Шăхасан районĕсем те государствăна тырă леçес тĕлĕшпе панă пилĕккунлăх заданисене иртерсе пурнăçласа пыраççĕ.

Анчах та государствăна тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхне республикăри нумай районсенче тĕпренех вăйлатмалла. Партипе правительствăн постановленине çирĕп пурнăçласа пымалла, натуроплата шучĕпе тухакан тата Хĕрлĕ Çар фондне хывмалли тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарас ĕçе кая хăвармалла мар.

Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпе 41,3 процент тултарнă. Вăл шутра обязательнăй йĕркепе памалли плана 64,5 процент, единоличниксен хуçалăхĕсем тăрăх 6,5 процент, натуроплата планне 20,1 процент пурнăçланă. Хĕрлĕ Çар фондне тума тырă хывмалли плана 24,4 процент пурнăçланă. Сентябрĕн 25-мĕшпе 30-мĕшĕ хушшинче государствăна тырă памалли пилĕккунлăх задани тăрăх республикăри районсем пурĕ 7.030 тонна тырă памалла пулсан, хатĕрлев пункчĕсене 4.199 тонна çеç леçсе панă. Ку вăл пилĕк кунта тумалли ĕçе 59,7 процент пурнăçлани пулать.

Государствăна тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхне тĕпренех вăйлатмалла. Тырă парас тĕлĕшпе кăçал эпир ку енĕпе иртнĕ çулхинчен начартарах ĕçлетпĕр. Çакă ĕнтĕ государствăна тырă леçсе парас ĕçе колхозсенче çирĕпрех йĕркелеме кирлине кăтартать. Районсенчи хатĕрлев организацийĕсен хăйсен ĕçне çивĕчлетмелле, ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен государствăна тырă парас ĕçе кашни колхозра кирлĕ пек организацилемелле.

Шăмăршă районĕ юлашки пилĕк кун хушшинче хатĕрлев пункчĕсене пурĕ те 35 тонна çеç тырă леçнĕ. Задани тăрăх 200 тонна леçмелле пулнă. Заданине пурнăçласа пырас ĕçе çĕнĕлле йĕркелесе, районри колхозсенче государствăна тырă парас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас ĕç, Пăрачкав, Первомайски, Елчĕк районĕсенче те кая юлса пырать-ха.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе парасси, обязательствăсене вăхăтра пурнăçласси — кашни колхозăн, колхозникпе колхозницăн чыслă тивĕçĕ. Ăна срокчен пурнăça кĕртнипе эпир Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва çĕнтерӳ тума пулăшатпăр.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн

ЙĔПРЕÇ. Районри колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн кĕрешӳ анлăн сарăлса пырать. Октябрь уявне ялхуçалăхĕнче пысăк ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илессишĕн колхозниксемпе колхозницăсем хастарлăн ĕçлеççĕ.

Шăртанти «Заря» колхоз членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн татах та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Сентябрĕн 27-мĕшĕнче колхоз кĕлтесене капана хывса çитерчĕ. Пур йышши тырăсене те хăвăртрах çапса пĕтерес тесе, авăна çĕрле те çапаççĕ. Авăн çапнă çĕрте кулленех 40 çын ĕçлет, вĕсем ĕç нормине кашни кунах 150—170 процент тултарса пыраççĕ. Колхоз çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Уя пĕр çĕрулми те ан юлтăр тесе, участоксене тепĕр хут сухаласа сӳреленĕ те çиеле тухнă çĕрулмисене пухса илнĕ. Çапла вара 17 гектар çинчен темиçе вуншар пăт çĕрулми çĕнĕрен пухнă. Пухса кĕртнĕ çĕрулмине кăçал туса лартнă çĕнĕ подвала хунă.

Кĕрхи çĕртме—вăйлă тырпулăн никĕсĕ. Кăна «Заря» колхозри колхозниксем лайăх ăнланаççĕ. Кăсал вĕсем иртнĕ çулта кĕрхи çĕртме тунă вырăнсенчен чылай пысăкрах тухăçлă тырпул туса илчĕç. Кăçал та вĕсем 241,2 гектар çинче кĕрхи çĕртме туса хăвараççĕ. Кĕрхи çĕртмере халь трактор тата 2 лаша пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. «Заря» колхоз государствăна обязательнăй йĕркепе тырă тăратас плана срокчен тултарассишĕн тăрăшать. Тăватă лаша кулленех тырă турттарнă çĕрте ĕçлет. Вĕсемпе кашни кун 2—3 хут хутласа «Заготзерно» пунктне кулленех 4—5-шер тонна тырă леçеççĕ. Анчах та юлса пыракан колхозсем те пур. Тĕслĕхрен, «Молния» колхоз пур ĕçсемпе те юлса пырать. Ку колхозра партин тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем пур. Анчах вĕсем колхоза конкретлăн ертсе пымаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва халĕ те хутшăнтарман.

Районри партипе совет организацийĕсен юлса пыракан колхозсем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла, вăл колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçлама пулăшмалла.

Д. МИХАЙЛОВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

ĂМĂРТУ САРĂЛСАХ ПЫРАТЬ

КАНАШ. (Телефонпа, хамăр корр.). Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту Канаш хулинчи промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче анлăн сарăлса пырать. Вагонсем юсакан заводра Журкин юлташ ертсе пыракан бригада вагонсене пăхса тĕрĕслесе тухас ĕçĕн çулталăкри планне сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне икĕ хут иртерсе тултарнă. Уйрăмах слесарь Инакеев юлташ лайăх ĕçлени палăрнă. Çав заводрах Федин тимĕрçĕпе Сергеев молотобоец пĕрле ĕçлесе буферсен стерженĕсене юсаççĕ, вĕсем, пĕр сменăра 8 стержень юсаса, нормăна иртерсе тултарнă.

Хĕрлĕ ялавлă вагонсем юсакан заводăн нумай цехĕсем—Соколовский, Токарев, Кавалерчик юлташсем ертсе пыракан цехсем—квартал планне сентябрĕн 18-мĕшне, срокчен вунă кун малтан тултарнă. Халĕ вĕсем планран иртерсе продукци туса кăларас тесе ĕçлеççĕ. Çав заводра Коломиец юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра Рязанцев юлташăн комплекс бригади аван ĕçлет. Çак бригада уйăхри плана срокчен 3 кун малтан иртерсе тултарнă. Çав цехра Капелюха, Чернухин юлташсен бригадисем те хăйсем çине илнĕ обязательствăсенче кăтартнинчен ытларах продукци туса кăларас тесе ĕçлеççĕ. Капелюха юлташăн бригади сентябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне планран иртерсе висĕ вагон юсаса кăларнă. Комсомолецсемпе çамрăксен «Ударник Сталинского призыва» значокпа наградăланă фронтовой бригади, Чесов юлташ ертсе пыраканскер, кулленех задание 400—500 процент тултарса ĕçлет.

Заводри стахановец электросварщик Орлов юлташ нумай пулмасть пĕр кунхи нормăна 700 процент тултарнă, çав кун вăл 80 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Чугунçул çинче паровозсен машинисчĕсемпе кочегарĕсем поездсене çуретмелли техникăллă хăвăртлăха иртерсе пурнăçлаççĕ. Харитоновпа Овчаренко машинистсем яланах поездсене техникăллă хăвăртлăхран маларах илсе çитереççĕ. Веденский, Калянганов, Харитонов, Овчаренко машинистсем топливăна перекетлеме тăрăшаççĕ. Харитонов юлташ сентябрĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче кăна 7 тонна ытла çĕркăмрăкĕ перекетлесе хăварнă. Юлашки хутра поезд ăсатнă чухне вăл 800 килограмм топливо перекетленĕ.

Инвалидсен «Красный воин» артелĕнче ĕçлекенсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура сентябрь уйăхĕнчи плана 12 процент иртерсе тултарма, таварăн хăйне ларакан хакне сентябрьте 2 процент, октябрьте 3 процент чакарма, учениксене пурне те харпăрхăй тĕллĕнех ĕçлекен пулмашкăн вĕрентсе çитерме сăмах парсаччĕ. Артель членĕсем çав обязательствăсене лайăх пурнăçласа пыраççĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехри работницăсем А. Шалина, А. Муленкова, О. Николаева, Сундырева т. ыт. те кулленхи нормăсене 250 процентшар тултарса ĕçлеççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Кварталти плана 103,8 процент пурнăçларăмăр

Шупашкарти пир-авăр фабрикин коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăй çине производство планне вăхăтра пурнăçлама тата лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма сăмах панăччĕ. Фабрикăри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем хăйсем панă сăмаха пурнăça кĕртме тăрăшаççĕ. 1942 çулти виççĕмĕш кварталти плана фабрика чĕрĕ пир тĕртсе хатĕрлессипе 103,8 процент пурнăçларĕ, сентябрь уйăхĕнчи плана 102,2 процент тултарчĕ.

Фабрикăра уйрăмах çип арлакан цех (начальникĕ Рычкова юлташ) тата пир тĕртекен цех (начальникĕ Сметанников юлташ) аван ĕçлеççĕ, вĕсем кашни кунах заданисене пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Мастер помощникĕн Соловьев юлташăн комплекчĕ фабрикăра малта пыракан комплект пулса тăрать, ку комплектра ĕçлекен работницăсем пурте яланах ĕç нормисене иртерсе тултараççĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çак комплектра ĕçлекенсем хăйсене фронтовой бригада тесе пĕлтерчĕç, хăйсемпе ăмăртса ĕçлеме Курочкин юлташ ертсе пыракан иккĕмĕш комплекта чĕнчĕç. Соловьев комплектĕнчи стахановкăсем Штанберг нормăна 112 процент, Николаева—125 процент тултарса ĕçлеççĕ. Çак комплект фабрикăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн кĕрешет.

Çип арлакан отделенире ĕçлекен А. Корнеева юлташ августăн иккĕмĕш çуруйăхĕнче задание 146 процент, сентябрĕн пĕрремĕш çуруйăхĕнче—106 процент пурнăçларĕ.

Слесарьсен Царев юлташ ертсе пыракан бригади сентябрь уйăхĕнче плана 300 процент тултарчĕ.

Фабрикăри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем халĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура илнĕ обязательствăсене, сентябрь уйăхĕнчинчен нумай пысăклатнă плана пурнăça кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Октябрь уявне государство планне пĕтĕмпех тултарнипе кĕтсе илме хатĕрленетпĕр.

А. НАУМОВА,
Фабрикăри партбюро секретарĕ.

Хĕле хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пырать

Хĕл кунĕсем çывхарса килеççĕ. Пирĕн предприятисемпе учрежденисем хĕл кунĕсенче те туллин, пĕр чарăнмасăр ĕçлетчĕр тесен, вĕсене хĕле пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрлемелле. Кунсăр пуçне тата рабочисем пурăнакан хваттерсене те тĕплĕн юсаса ăшă тумалла.

Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе Çĕмĕрле хулинчи уйрăм учрежденисемпе предприятисем начар мар ĕçлеççĕ. Ку ĕç уйрăмах партипе профсоюз руководителĕсем хĕле хатĕрленес ыйтăва ытти ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса туса пынă çĕрте организованно пулса пырать. Иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул (директорĕ коммунист Савельев юлташ) хĕле пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ. Унăн вутă çителĕклĕ, чӳречесен иккĕмĕш рамисене лартнă, çĕмрĕккисене юсанă. Кунта вĕренӳ çулĕ пуçланиччен пӳлĕмсене сăрлас, партăсене, доскасене, кăмакасене юсас ĕçсене те ăнăçлăн вĕçленĕ.

Анчах чылай предприятисемпе учрежденисенче хĕле хатĕрленес ĕçе питĕ сӳрĕккĕн туса пыраççĕ. Чи пысăк предприятисенчен пĕри—комбинат хĕл кунĕсене хатĕрленес ĕçе вăраххăн туса пырать. Кунта уйрăм цехсене юсаса пĕтермен, хваттерсене юсас ĕçе çуррине те пурнăçламан. Уйрăм çуртсене паян кун та юсама тытăнман. Акă 22-мĕш çуртах илер. Ку çуртăн алăкĕсем, коридор чӳречисем çĕмрĕк, хăшпĕр пӳлĕмсенче кăмакасем юсавсăр. Мĕншĕн тесен кунта кăçал ремонт туман.

Комбинат поселокĕнчех 24, 28, 32-мĕш çуртсенче те хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене туса иртермен. Çăмăр çусан уйрăм пӳлĕмсене шыв анать, чӳрече кантăкĕсем çĕмрĕк.

Çак фактсем ĕнтĕ комбинат дирекцийĕ, уйрăмăнах çурт-йĕр пайĕ хĕле хатĕрленес ĕçе сӳрĕккĕн ертсе пынине кăтартса парать.

Хĕл кунĕсенче хутма вутă хатĕрлесси—чи ответлă ĕç. Унсăрăн пĕр организаци те ĕçлеме пултараймасть. Анчах хулара ку ĕçе тивĕçлĕн туса пымаççĕ. «Большевик», «Труженик» заводсем, комбинат хăйсене валли вутă хатĕрлемелли плана çурри те тултарман. Коммунальнăй мунча валли халь хутма та вутă çитмест, çавна пула вăл туллин, кунĕпех ĕçлеймест. Çакăншăн, паллах, хула совечĕ айăплă.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пур ĕçе те фронт ыйтнă пек туса пымалла. Хальхи вăхăтра япăх ĕçлени, государство панă заданисене вăхăтра пурнăçласа пыманни преступлени туни пекех. Апла пулсан, хĕле хатĕрленес ĕçе те пысăк организованнăçпа туса пымалла, тĕплĕн хатĕрленмелле. Мĕншĕн тесен предприяти е организаци хĕл кунĕсенче пысăк тухăçлăхпа ĕçлесси хĕле тĕплĕн хатĕрленнинчен чылай килет.

В. КАСЬЯНОВА,
Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ.
ÇĔМĔРЛЕ ХУЛИ.

Уяв парнисем хатĕрлеççĕ

ЕЛЧĔК. Октябрĕн 2-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем хатĕрлесе парас ĕç сарăлсах пырать. Халĕ 49 кĕрĕк пиншак, 69 мăшăр çăматă, 115 çĕлĕк, 57 мăшăр çăм алшишсем, 92 мăшăр чăлха, 45 мăшăр ăшă кĕпе, ваткăран çĕлесе тунă 23 шалавар, 25 кальсон, 211 килограмм çăм, 199 тир хатĕрленĕ, вĕсенчен чылайĕшне фронта янă.

Районри кустарьсем боецсем валли çăматăсем тăваççĕ, кĕрĕк пиншаксем çĕлесе хатĕрлеççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли «Смычка» колхоз колхозникĕсем 5 кĕрĕк пиншак, 4 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 5 çĕлĕк, «Правда» колхоз членĕсем 5 кĕрĕк пиншак, 5 çĕлĕк тата ыттисене те ярса параççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь уявĕ ячĕпе фронтри боецсем патне 285 килограмм какай, 95 килограмм çу, 79 килограмм пыл, 35 килограмм махорка, 115 килограмм колбаса, 3.400 штука çăмарта т. ыт. те ярса параççĕ.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче палăллă улшăнусем пулман.

Пирĕн карапсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен пĕтĕмпе 18.000 тонна водоизмещениллĕ 2 транспортне путарнă.

* * *

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкне çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенлетнĕ, боеприпассен 4 складне сирпĕтерсе янă, артиллерин 10 батарейне пусарса лартнă, нимĕçсен 4.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă, противникăн пехотине тăватă ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче çапăçусем пынă. Хулан çурçĕр-хĕвеланăçĕнчи хĕрринче противникăн пысăк вăйĕсем пирĕн позицийĕсене кун каçиччен улттă хутчен атакăланă. Пилĕк атакине совет боецĕсем сирсе янă, улттăмĕш атака хыççăн вара нимĕçсем кăшт малалла куçма пултарнă. Çав çапăçусенче тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ. Пĕр участокра кăна пирĕн боецсем 900 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 12 танкне тата 30 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

Сталинградран кăнтăраллахра пирĕн чаçсем нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хăваласа кăларнă. Халăх пурăнакан çак пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити вĕлерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 5 оруди, 10 пулемет, 15 автомашина, 3 склад тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тăшман темиçе хутчен контратака тунă, анчах та унăн, икĕ ротăна çити пехота çухатса, каялла чакмалла пулнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем çапăçнă. Совет артиллерисчĕсем пехота чаçĕсене пулăшса пырса, нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ, противникăн артиллерин 2 батарейне тата минометсен 3 батарейне пусарса лартнă. Нимĕç танкĕсем Н-ски чаçăн тылне автоматчиксен десантне антарса хăварма хăтланнă. Пирĕн боецсем тăшманăн маневрне вăхăтра асăрханă. Противотанковăй орудисемпе персе, нимĕçсен 6 танкне çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен автоматчикĕсене 200 çынна çити вĕлерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕ противникăн атакине сирсе янă, 3 танк, 2 бронемашина персе тăкнă тата 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Тепĕр участокра пирĕн минометчиксем нимĕçсен пĕр çĕре пуçтарăнса тăнă боецĕсене персе, противникăн 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тинĕс пехотин Кравченко юлташ ертсе пыракан чаçĕсем активлăн çапăçнă. Икĕ кун хушшинче краснофлотецсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити вĕлерсе тăкнă. Туллимар даннăйĕсем тăрăх, вĕсем 30 пулемет, 21 миномет, 307 автомат, 200 мина, 100 граната, 50.000 ытла винтовка патронĕ тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Оборонăн малти линийĕ çинче нимĕçсен 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн чаçсем хаярран çапăçнă. Совет чаçĕсем противник çине кун каçиччен темиçе хутчен те атакăланă. Н-ски соединени боецĕсем гитлеровецсен атакисене сирсе янă, 700 салтакпа офицера çити вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн чаçсем активлăн çапăçса противникпа пăртак вăйлла чакарнă, 2 миномет, 20 пулемет, 80 винтовка, 2 радиостанци тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 323-мĕш пехотăй дивизийĕнчи 594-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне каçнă салтак Рудольф Б. çапла каланă: «594-мĕш полкри ротăсенче кашнинчех 160—180 çын шутланатчĕ. Кашни çапăçу хыççăн полк вăйĕ хăвăрт хавшанса пычĕ. Нумаях пулмасть, 7-мĕш рота командирĕ Пастерман обер-фельдфебель Шейке фельдфебельне çапла каларĕ: «Манăн ротăра 48 салтакпа унтер-офицер кăна юлчĕ».—тет. Ăна хирĕç Шейке çапла каларĕ: «Манăн унтан та сахалтарах», терĕ. Полкра 50 салтакран ытлашши пĕр рота та çук, офицерсен нумайĕшĕ стройран тухрĕç. 6-мĕш тата 9-мĕш рота командирĕсене вĕлернĕ. Батальон командирĕ Гофман капитан аманнă. Дивизи, пĕтĕмĕшпе илсен, питех те пысăк çухатусем тӳснĕ, виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ пĕр вырăнтах тапăртатса тăрать, унăн наступлени тума вăй çук. Салтаксем нумайĕшĕ çапла калаççĕ: Гитлер ку вăрçа 1941 çулта пĕтерме пулчĕ, анчах та пире улталарĕ. Ĕнтĕ иккĕмĕш хĕл çывăхарса килет, анчах вăрçă пĕтессине кăçал та курăнмасть, теççĕ».

* * *

Катовицы çывăхĕнчи концентрацилле лагере лекнĕ совет çыннисене—тыткăна лекнĕ красноармеецсене тата мирлĕ гражданисене—массăллăн пĕтерни çинчен калакан пĕлтерӳ килнĕ. Ку лагерьте нумаях пулмасть тиф сарăла пуçланă. Нимĕçсен çар управленийĕн приказĕ тăрăх, гитлерла палачсем çак лагере хупнă çыннисене пурне те—чирлисене те, сывăсене те—персе пăрахнă.

Октябрĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 2-мĕшĕ ирхи тенĕ хушшинче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче пĕлтерӳ улшăну та пулман.

Сталинград районĕнче пĕр участокра нимĕçсем совет войскисен оборонине тата кĕме хăтланнă. Орудисемпе тата противотанковăй оружисемпе персе, нимĕçсен 8 танкне персе тăкнă. Противникăн пирĕн чаçсем тăракан позицийĕсене хыçалтан пырса тухма тăнă, нимĕçсен 2 танкне çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе çунтарса янă. Çав çапăçура гитлеровецсен 200 çынна çити вилнĕ, нимĕçсем вара хăйсен малтанхи позицийĕсене чакнă.

Н-ски соединени летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 9 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре гвардейски чаçăн подразделенийĕсем пĕр высотăна атакăласа ăна нимĕçсенчен тасатнă. Çак çапăçура нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне çити персе пĕтернĕ, 11 пулеметне тата 18 дзотне блиндажне пĕтерсе тăкнă. Булатов юлташ командир пулса тăракан артиллери батарейĕ, пирĕн подразделенисене пулăшса пынăскер, нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ тата ултă кĕпçеллĕ минометсен батарейне пусарса лартнă.

* * *

Моздок районĕнче Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ, 8 автомашинине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн кавалери подразделенийĕ çĕрле халăх пурăнакан пĕр пункта, гитлеровецсем йышăнăскере, пырса тапăннă. Совет кавалеристĕсем нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити касса тухнă, икĕ бронемашинине çĕмĕрнĕ тата горюче складне çунтарса янă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн икĕ кун хушшинчи çапăçăвĕсенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 8 миномет, 25 пулемет, 4 оруди, минометсен пĕр батарейне тата боеприпассен складне персе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн разведчиксемпе снайперсем активлăн кĕрешсе икĕ кун хушшинче тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе тăкнă. Пирĕн боецсем нимĕçсенчен 10 ротăлла миномет тата 50 автомат ытла тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен авиацийĕ пысăк çухатусем тӳсет. Ленинград фрончĕн тата Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 24 самолетне персе ӳкернĕ. Çав вăхăт хушшинче пирĕн зениттăй артиллери 27 самолета персе тăкнă. Икĕ кун хушшинче Ленинград патĕнче противникăн 51 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕнчи партизансем икĕ эрне хушшинче венгерецсен 280 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Çав вăхăт хушшинчех партизансем спирт заводне, нефтебазăна, 3.000 тонна утта çунтарса янă, 12 трактора пĕтерсе тăкнă тата 2 йывăç кĕпере ишнĕ. Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче партизансем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен пĕр поездне йăтăнтарса янă. Противникăн чĕрĕ вăйĕпе тĕрлĕ çар техникине тиенĕ 33 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

8-мĕш кавалери полкĕн пĕрремĕш эскадронĕнчен тыткăна лекнĕ Константин Булгарю çапла каласа панă: «Халăх пурăнакан икĕ пунктшăн пынă хаяр çапăçусенче пĕрремĕш эскадронра 152 çын вилнĕ е аманнă. Ытти эскадронсем те пысăк çухатусем тӳснĕ. Юлашки вăхăтра румын салтакĕсем нумайĕшĕ нимĕçсенчен хăйсене çăлса илесçĕ. Вĕсене хăйсен çемйисем выçă ларни çинчен çыраççĕ».

* * *

Нимĕç салтакĕ Рудольф Эберле çумĕнче Праффенгофенран янă çыру тупнă. Амăшĕ çапла çырать: «Хуласенче халĕ питĕ начар, анчах ялсенче те унтан лайăх мар. Пирĕн ĕçсем тата мĕн пуррине парса яма çес тивет. Нумай хресченсене тĕппипех тустарчĕç. Пурте шăппăн ӳпкелешеççĕ, анчах тем те калама хăраççĕ. Униăн питĕ пысăк наказани параççĕ, вĕсене те пултараççĕ».

* * *

Эльзас-Лотарингри халăхĕ нимĕç захватчикĕсене вăйлăн хирĕç тăрать. Çамрăксем нимĕçсен çар влаçĕсен призыв участокĕсене пымаççĕ. Феррет çывăхĕнче темиçе çын нимĕç патрульне тапăннă та 3 гитлеровеца вĕлернĕ. Страссбургра çак юлашки кунсенче ирхине тротуарсемпе стенасем çинче час-часах çакăн пек лозунгсем курма пулать: «Юнлă Гитлер тĕп пултăр!», «Эльзас ирĕклĕ пулнă, малашне те ирĕклĕ пулĕ!», «Фашистсене вилĕм!».

Сталинград геройĕсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Питех те пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах, çапăçу хирне хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен виллисемпе витсе пырса, тăшман Сталинград патнеллех талпăнать. Çĕр çинче те, сывлăшра та хаяр çапăçусем кăнтăрла та, çĕрле те чарăнмаççĕ. Пирĕн чаçсем гитлеровецсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ, вĕсене тăтăшах пыра-пыра çапаççĕ, тăшмана халран яраççĕ. Сталинградшăн пыракан çапăçусенче совет çĕрĕн кашни метрне хăйсен кăкрĕпе хӳтĕлекен воинсем ĕмĕрлĕхе мала тухрĕç.

Пирĕн пĕр подразделение тăшманăн йывăр тата вăтам 100 танкĕ атакăланă. Пехотăна пулăшса тăракан артиллеристсем тӳрĕ тĕллесе пенĕ. Тăшман совет позицийĕсене хирĕç хăйĕн йышлă машинисене кăларса ярсан, артиллеристсем пĕр тăтăш вутçулăм хӳми туса хунă. Фашистсем техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ, çапах та малаллах талпăннă.

Совет боецĕсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсенчен пĕр утăм та каялла чакман. Танксене мала ирттерсе ярса, вĕсем фашистла пехота çине çав тери вăйлăн пеме тытăннă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем сахаллăшĕ кăна чĕрĕ тăрса юлнă. Тăшманăн машинисем пирĕн наблюдательнăй пункт тăракан высота çине çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Батарейăсен командирĕсем подразделени командирĕнчен Бондаренкăран çакăн пек приказ илнĕ:

— Высота çине, ман çине перĕр!

Высота çине совет артиллерисчĕсен снарячĕсем вĕçсе пыра пуçланă. Тăшманăн темиçе танкĕ çунса кайнă. Наблюдательнăй пунктра тăракан Бондаренко мĕнле тӳрĕ пемеллине кăтартса тănă. Снарядсем тĕл ӳкнĕ. Нимĕç машинисем пĕрин хыççăн тепри стройран тухса пынă. Бондаренко герой вилĕмĕпе вилсе выртнă. Анчах та фашистсен танкĕсем те малалла кайман. 16 танк тата нумай салтакпа офицера çухатсан, тăшман каялла чакнă.

Тул çутăлма та тытăнман, нимĕçсен артиллерийĕпе миномечĕсем Калюта сержантăн оруди расчечĕ йышăнса тăракан позицисем çине вăйлăн пеме тытăннă. Совет артиллерисчĕсем тăшманăн темиçе минометне пусарса лартнă, анчах та тăшман пеме чарăнман. Çав вăхăтра наводчик оруди патне тăшманăн танкĕсем вăрттăн йăпшăнса пынине асăрханă, вĕсем 12 танк пулнă, тылран тăшманăн автоматчикĕсем пыра пуçланă. Лару-тăру çивĕчленсе пынă:

— Оруди ĕçлеми пуличчен вырăнтан тапранмалла мар!—тесе приказ панă Калюта. Артиллеристсем тăшманăн танкĕсем çине пеме тытăннă. Тăшманăн 4 танкĕ пĕрин хыççăн тепри вут тивнипе çунса кайнă, ыттисем каялла çаврăнса кайнă. Хăйсен танкĕсем тарнине курсан фашистсен автоматчикĕсем те васкасах каялла чакнă. Анчах та сахаллăшĕ çеç тарса хăтăлма пултарнă, нумайĕшне пирĕн батарея харăссăн персе тăрса вĕлерсе пĕтернĕ.

Блиндажра виçĕ совет боецĕ, çав шутра Сергей Гайнов красноармеец та тăнă. Вĕсем пирĕн подразделени пырса çитиччен рубежа кирек мĕн пулсан та хăйсен аллинче тытса тăма приказ илнĕ. Гайнов аманнă. Блиндажсем патне нимĕçсен икĕ танкĕ çывăхарса пыма тытăнсан, вăл суранĕ ыратнине пăхмасăр блиндажран тухнă та, танксем патне пластунла шуса пырса, çав танксенчен пĕрне гранатăсен çыххипе персе çĕмĕрнĕ. Танксем хыççăн нимĕç автоматчикĕсем пынă. Гайнов хăйĕн автомачĕпе персе икĕ гитлеровеца вĕлернĕ. Автомат темшĕн ĕçлеме чарăннă. Вара Гайнов винтовка илнĕ те тата 5 нимĕçе вĕлернĕ. Пырса çитнĕ красноармеецсем юн юхтарса выртакан, анчах та винтовкине хăйĕн аллинче çирĕп тытса тăракан Гайнова тупнă.

Н. МАРКОВСКИЙ.

Ют çĕршывсенче

Уилки заявленийĕ пирки Америкăри пичет мĕн çырать

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Уилки хăй Мускавран тухса каяс умĕн пичет представителĕсене панă интервью пирки Америкăри пичет питех те интересленсе çырать. Çав интервьюра Уилки çапла каланă: «Российăна пулăшса вăрçăра çĕнтермелли чи лайăх майсенчен пĕри вăл Великобританипе пĕрле Европăра чăн-чăн иккĕмĕш фронт туса хуни пулса тăрать, çав иккĕмĕш фронта мĕнле те пулсан хăвăртрах, çар руководителĕсем ырлакан срокра, уçмалла, обществăллă шухăшăн ку енĕпе, тен, çар руководителĕсене хистемелле те пулать пулĕ».

Нью-Йоркри чи пысăк хаçатсем—«Нью-Йорк таймс», «Нью-Йорк геральд трибюн» тата ыттисем те Уилкин заявленине курăнмалла вырăнта пĕтĕмĕшпех пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк таймс» хаçат çав заявление—«Уилки иккĕмĕш фронт уçма чĕнет. Вăл Европăна çар руководителĕсем ырлама пултаракан чи кĕске срокра тапăнса кĕме чĕнет» текен заголовокпа пичетленĕ. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн заголовокĕнче çапла каланă. «Уилки иккĕмĕш фронта сывăх вăхăтсенчех уçма ыйтать», тенĕ.

Конгресăн чылай членĕсем Уилки иккĕмĕш фронта уçма чĕнсе калани майлă пĕр иккеленмесĕр тăраççĕ,—тесе çырать «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат. Демократсен сенатри лидерĕ Пеппер çапла каланă: «Нимĕçсене Хĕвелтухăç фронтĕнчен катертес тесе, пирĕн хамăрăн вăйсене Европа енчен тапăнма пухса тăратмалла. Нимĕн тумасăр ларни чи начар стратеги пулса тăрать», тенĕ.

Чикагори «Сэн» хаçат: Америкăпа Англи халăхĕсем Совет Союзне активлă пулăшу пама хатĕр тăраççĕ, тесе çырать. Хăйсен чунĕнче гитлерла Германие çапса аркатасшăн мар тăракан политикансене хаçат сивлет.

Хăшпĕр хаçатсем çар руководителĕсене Уилки каланă пек «хистесси пирки» иккĕленсе çыраççĕ. Скриппс—Говард тытса тăракан хаçатсен трестĕнче тухакан «Нью-Йорк уорлд телеграмм» хаçат, иккĕмĕш фронт ыйтăвĕ çар çыннисем кăна татса пама пултаракан ыйту пулса тăрать тесе, халăхсен анлă массисем Европăра иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма ыйтнине хирĕç темиçе хутчен те çырнăскер, çар руководителĕсене «хистеме» кирли çинчен Уилки каланине сивлет. Хаçат çав заявление «ырă шухăшлă мар» заявлени тесе шутлать.

Америкăри радиокомментаторсем те Уилки заявленине тĕп вырăна хурса калаçаççĕ. Паллă журналистка Дороти Томпсон хăйĕн радио тăрăх каланă сăмахĕнче çапла пĕлтернĕ: вăрçăри лару-тăру улшăннă пирки иккĕмĕш фронт ыйтăвне хăвăртрах татса пама кирли тухса тăрать, тенĕ. Германия пĕр çулталăк та çук-ха пачах та пĕтсе ларас шăпа умĕнче тăни çинчен Томпсон уйрăмăн аса илтернĕ. Вăраха тăсăлса халран яракан вăрçă вырăнне Германин çавтери пысăк çар машинине вăрçăра маневр туса çапса аркатмалли лару-тăру тухса тăнине Америкăри çар экспертчĕсем ун чухне курса ĕлкĕреймерĕç. Кунсăр пуçне, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем те ун чухне хатĕрленсех çитейменччĕ. Халĕ ĕнтĕ, тенĕ Томпсон, вырăссем нимĕçсене, пĕлтĕр Мускав патĕнче чарса лартнă пекех, Сталинград патĕнче чарса лартрĕç. Гитлерăн наступленийĕ хăйĕн хăвăртлăхне çухатрĕ. Нимĕçсем Сталинграда тытса илме пултараймасан, вырăссен питех те чаплă стратегийĕ нимĕçсемшĕн çав тери хăрушла лару-тăру туса хурать. «Эпир çак лару-тăрупа усă курсан, Германи çарĕсем поражени тӳсеççĕ,—тесе калать Томпсон.—Вырăссем çакна ăнланаççĕ, çавăн çинчен пире калаççĕ. Вырăссем туса пынă усăллă саманта эпир татах та вĕçертсессĕн, урăх çавăн пек самант, тен, пачах та килсе тухмĕ. Уилки заявленийĕн пĕлтерĕшĕ çакăн пек ĕнтĕ».

„Гитлерла Германи ишĕлсе анать!“

Бенеш тухса калани

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кĕрешекен Францин национальнăй комитечĕ Мюнхенри килĕшĕве пăрахăçа кăларнă майпа Чехословаки президенчĕ Бенеш Чехословаки халăхне чĕнсе радио тăрăх сăмах тухса каланă. «Гитлер тунă мĕнпур ĕçсен шăпи Мюнхенри килĕшĕвĕн шăпи пекех пулать. Вăл çав килĕшĕве ултавлă майсемпе ирĕксĕрлесе тутарчĕ. Çав килĕшӳ пекех гитлерла Германи те ишĕлсе анас кун çитессине, Мюнхен хули вара, çав нацистла Мюнхен, Англипе вырăс бомбардировщикĕсем бомбăсем пыра-пыра пăрахнипе арканса каяс кун çитессине шанса тăратпăр», тенĕ Бенеш.

ЛАВАЛЬ «ШАЛТИ ФРОНТРА» КĔРЕШМЕ ОТРЯДСЕМ ХАТĔРЛЕТ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Виши правительстви йышăннă тăрăх, çар ĕçĕсен статс-секретарĕ çумĕнче «ятарласа войскăсем хатĕрлекен управлени» туса хураççĕ. Çав управлени тӳрремĕнех Брид генерала пăхăнса тăмалла пулать. Çав решение Берлинран кăтартса панă тăрăх йышăннă. Берлин «шалти йĕркесене тытса тăнă» çĕрте, урăхла каласан çĕршыври патриотизмлă движение пусарса лартнă çĕрте Виши çарĕсемпе татăклăн усă курма хушнă. Францин оккупацилемен зонинчи чылай пунктсенче çар чаçĕсем «ятарласа хатĕрленĕ программа» тăрăх васкасах çар ĕçне вĕренеççĕ. Çав программа, тĕпрен илсен, Германири шалти эсэс войскисен программипе пĕр пек пулса тăрать.

Унччен малтан çар чаçĕсене тĕпренех урăхлатса йĕркеленĕ. Рядовойсемпе офицерсен составне «çĕнетнĕ». «Ятарласа хатĕрлекен войскăсен» çĕнĕ дислокацине тунă. Унта чи паха центрсене «шанчăклă хурал тăратма» пăхнă. «Йĕркелĕхе сыхлама» тунă чаçсенчен «шанчăксăр элементсене» тасатнă пулин те, Виши ушкăнĕ салтаксемпе офицерсене намăсла ĕç тума хатĕрленине хирĕç нумай выступленисем уççăнах пулса иртнĕ. Юлашки кунсенче тĕрлĕ чаçсенчи военнослужащисене темиçе вуншар çынна арестленĕ

ПАРИЖРА 250 АМЕРИКАНЕЦА АРЕСТЛЕНĔ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Париж полицийĕ 250 американеца ытла арестленĕ. Арестленисене нимĕç влаçĕсен аллине панă, çаксем вара вĕсене Булонски вăрманти зоологи садĕнче упăтесене усракан вырăнта ниçта тухса çӳреме памасăр усрамалла тунă.

ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕМПЕ ТЫТАКАН ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУСЕНЕ ТАТАССИ ÇИНЧЕН АРГЕНТИНĂН ДЕПУТАТСЕН ПАЛАТИ РЕШЕНИ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăн депутатсен палати тĕнĕл держависемпе тытакан дипломатиллĕ çыхăнусене татмашкăн правительствăна сĕнсе йышлăрах сасăсемпе решени йышăннă.

МАДАГАСКАРТИ ОПЕРАЦИСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине Англи войскисем Мадагаскарăн кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕнчи Тулеха портне пырса аннă. Порта противник хирĕç тăмасăрах панă. Англин хĕвелтухăçнелле тата хĕвеланăçнелле Таннанриве çулĕ тăрăх пыракан колоннисем пĕрлешнĕ те Мадагаскарти тĕп чугунçул линине йышăнса илнĕ. Англи войскисем столицăран кăнтăралла куçнă. Вĕсене противник сахал хирĕç тăнă. Англи войскисем Антсинаре патнелле куçса пыраççĕ.

АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ ТУЛЕАРА ТАТА ФОР-ДОФЕНА ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Мадагаскарăн кăнтăрти çыранĕнче Тулеар тата Фор-Дофен порчĕсене тытса илнĕ.

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, демонстрантсем халь полицие ĕлĕкхинчен те вăйлăрах хирĕç тăраççĕ. Бомбейра халăх хумханма тытăннăранпа 2 пин çынна ытла арестленĕ.

Бангалора хулинчен инçех мар вырăнта чукмарсемпе хĕçпăшалланнă темиçе çĕр çын полици чиновникĕсене тапăннă. Хула управленин членне тата полици инспекторĕн помощникне вĕлернĕ, темиçе çынна амантнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

Хисеплĕ ĕçе куллен ертсе пымалла

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Механизацилене вăрман пунктĕнчи пуçламĕш парторганизаципе рабочком ăшă тумтирсем пухас ыйтăва пĕрре кăна мар сӳтсе-явнă, вĕсем ку ĕçпе кулленех интересленеççĕ. Çавна май юлашки вăхăтра кунта 35 мулаххай, 3 ваткăллă брюки, 46 тир, 7 килограмм ытла çăм, 14 алшиш, 4 кĕпе, 22 алшăлли тата 5 минтер пичĕ пухнă.

Егоркино ялсоветĕнче те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе юлашки вăхăтра улшăнусем турĕç. Унти коммунистсем çак ыйтупа колхозниксем хушшинче калаçусем ирттереççĕ, Хĕрлĕ Çар воинĕсен геройла ĕçĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Кунти колхозниксем кĕске вăхăт хушшинчех 35 килограма яхăн çăм, 8 тир, кĕрĕк пиншак, темиçешер мăшăр носкисемпе алшишсем, простынясем, алшăллисем т. ыт. те панă.

Çав вăхăтрах уйрăм колхозсемпе организацисенче ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çĕмĕрле, Макарин тата Вăрман Тăван ялсоветĕсенчи ĕççыннисем хушшинче ку таранччен те пĕр ăшă тумтир те пухман. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех ялсовет тата колхоз руководителĕсенчен, ялти актив масса хушшинче ĕçлеменнинчен килет. Ыйтасчĕ Çĕмĕрле ялсовет председателĕнчен Красильникова юлташран: мĕнех туса ирттернĕ-ха вăл ку таранччен? Паллах, Красильникова юлташ нимĕнле ответ та параймасть. Мĕншĕн тесен вăл ăшă тумтирсем пухас ыйтăва активпа пĕрле сӳтсе-явман. Çитменнине тата куллеххи ĕçре ку ыйтăва пачах та аса илмеççĕ. Партипе профсоюзсен «Большевик» тата «Труженик» заводсенчи организацийĕсем ăшă тумтирсем пухас ĕçе пуçарса яман-ха. «Труженик» заводăн пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Герасимов юлташ каланă тăрăх, вĕсем çак ыйтăва çитес кунсенче çеç сӳтсе-явма шутлаççĕ.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç—хисеплĕ ĕç. Ана пысăк тимлĕхпе туса пымалла.

Кролик ферми тупăшлă пулчĕ

ЕТĔРНЕ. Иртнĕ çул Чупайри Киров ячĕпе тăракан колхоз кролик ферми организацилерĕ. Ырханка та пĕчĕк кроликсем çине пăхса, чылай колхозниксемпе колхозницăсем ун чухне ку кроликсенчен тулкки пулас çук пуль тесе шухăшларĕç. Анчах Скворцов колхозник хăй пуçарнă ĕçе вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртме шутларĕ. Вăрманара кайса, вăл 23 кролик илсе килчĕ, вĕсене хăйĕн патĕнче пăхса хĕл каçарчĕ.

1942 çулта кроликсен хисепĕ икĕ хут ӳсрĕ. Паянхи куна колхозăн ферминче 69 кролик. Вĕсене иртнĕ çулхи пекех Скворцов юлташ юратса пăхать.

Колхозăн çĕнĕ ферми чылаях пысăк тупăшлă пулчĕ. Кăçал вăл кроликсенчен пурĕ 10 килограмм мамăк пухрĕ тата государствăна аш-какай парас шутпа 10 кролик пачĕ.

Вырăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре примерлă ĕçленĕшĕн Киров ячĕпе тăракан колхоз кăçал хăйĕн кролик фермипе районри ялхуçалăх выставкине тухма тивĕçлĕ пулчĕ.

Е. РЫБАКОВ.

—o—

Пĕлтерӳ

Октябрĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртĕнчи заседанисен залĕнче лекци пулать. Лекци теми: «Отечественнăй вăрçăн хальхи саманчĕ тата пирĕн задачăсем».

Лекцие лектор Юлин вулать.

Кĕрсе итлеме 1 тенкĕ тăрать.

Билетсене кино-театрăн кассинче тата ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн парткабинетĕнче сутаççĕ.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КУВАКИНСКОМУ ДОМУ ИНВАЛИДОВ ОТЕЧЕСТВЕННОЙ ВОЙНЫ требуются инструменты для художественной мастерской: лобзики и пилки разных размеров. С предложением обращаться письменно или лично по адресу: с. Кладбищи, Кувакинский индом.

ТРЕБУЮТСЯ Чувашскому Государственному Академическому театру: гардеробщицы, истопницы, рабочие сцены.

ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКАНСКАЯ КОНТОРА АВТОТРАКТОРОСБЫТ доводит до сведения всех автохозяйств о том, что проводится инвентаризация: по Канашскому МРО—с 30 сентября по 4 октября, по Чебоксарскому МРО—с 1 октября по 4 октября 1942 г.

ДИРЕКЦИЯ.

На основании постановления СНК ЧАССР от 2 августа 1942 года и распоряжения Чувашпромсоюза от 25/IX—42 г. за 119. СЮКТЕРСКАЯ ЛЕСПРОМАРТЕЛЬ ЛИКВИДИРУЕТСЯ. Организации, имеющие к ней какие-либо претензии, должны предъявить их ликвидкому в декадный срок.

ЛИКВИДКОМ.

НА ОСНОВАНИИ ПОСТАНОВЛЕНИЯ СОВЕТА НАРОДНЫХ КОМИССАРОВ СССР СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ НАЧАЛИ ПРИЕМ ВЫИГРЫШНЫХ ВКЛАДОВ.

Тиражи выигрышей по выигрышным вкладам производятся два раза в год.

В каждом тираже на 1000 сберегательных книжек разыгрываются:

1 ВЫИГРЫШ—в размере 200% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;

2 ВЫИГРЫША—каждый в размере 100% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;

22 ВЫИГРЫША—каждый в размере 50% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке.

Вкладчику предоставляется право пополнить свой выигрышный вклад или получить его в любое время частями, либо полностью из сберегательной кассы.

ВНОСИТЕ ВЫИГРЫШНЫЕ ВКЛАДЫ В СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ.

УПРАВЛЕНИЕ ГОСТРУДСБЕРКАСС И ГОСКРЕДИТА ЧУВАШСКОЙ АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11558 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.